26-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
26
ЭРНЕКУН
46(6283) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çулпуç Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшма чĕнет

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа кăларнă приказне пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче нумай йышлă митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Рабочисемпе колхозниксем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ, çулпуçăн приказĕ çине ответлесе малашнехи ĕçре татах та пысăк çитĕнӳсем тума пулса, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн кĕрешӳри ялавне нихçан манăçа тухми чапа кăларнă боецсене тата командирсемпе политработниксене ĕççыннисем ăшă сăмахсемпе саламлаççĕ.

Сталин юлташăн приказĕ пирĕн ĕççыннисене çĕнĕ вăй парать, вĕсен производствăри тата политикăллă активлăхне çĕклет, фронта пĕтĕм вăйпа пулăшма мобилизацилет.

Çулпуçăн историллĕ приказĕнче пĕтĕм Совет çĕршывĕн, унăн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн вăй-хăватне кăтартса панă. Çавăнпа пĕрлех Сталин юлташ пирĕн тылăн ĕçне те пысăк вырăна хурса хакланă.

Хăй 25 çул тултарнине Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Вăл «нимĕç фашисчĕсен кĕтĕвĕсем хĕссе килнине тӳссе иртерчĕ кăна мар, тата вăрçă пынă вăхăтра фашистсен çарĕсемшĕн аçа-çиçĕм пулса тăчĕ», терĕ Сталин юлташ.

Хĕрлĕ Çарăн войскисем виçĕ уйăх каярах Сталинград патĕнче наступлени тума пуçларĕç. Çак вăхăтран пуçласа вăрçă ĕçĕсенчи пуçарулăх Хĕрлĕ Çар енне куçрĕ. Халĕ вăл хĕллехи йывăр условисенче 1.500 километр тăршшĕ тăсăлакан фронтра тапăнса пырать тата пур çĕрте те пекех ăнăçусем тăвать. Çак виçĕ уйăх хушшинче Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен çарне чылай пысăк пораженисем тӳстерчĕ, фашистла захватчиксенчен Совет Союзĕн 14 облаçне, крайне тата автономлă республикине ирĕке кăларчĕ, противникăн 112 дивизине аркатса тăкрĕ, тăшманăн 700 пин ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкрĕ, 300 пин ытла салтакĕпе офицерне тыткăна илчĕ. Кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 7.000 танкне, 4.000 самолетне, 17.000 орудине тата ытти хĕçпăшалĕсене нумай пĕтерсе тăкрĕ е тытса илчĕ.

Вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар пĕтĕм тĕнчери кирек хăш çарпа та танлашма пултаракан кадровăй çар пулса тăчĕ. Вăл тăшмана унăн вăйсăр тата вăйлă енĕсене шута илсе шанчăклăн çапма вĕренсе çитрĕ. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем хăйсен хĕçпăшалĕн мастерĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен хăюлăхĕпе паттăрлăхне войскăсене ертсе пырассипе çыхăнтарма вĕренсе çитрĕç, ăссăр та сиенлĕ линейнăй тактикăна пăрахăçа кăларса, маневрсем тăвас тактикăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕç.

«Хĕрлĕ Çар командованийĕ Совет çĕрне тăшманран ирĕке кăларать кăна мар, вăл тата тăшмана пирĕн çĕр çинчен чĕррĕн те кăларса ямасть, тăшман çарĕсене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çар искусствин чи лайăх тĕслĕхĕ пулма пултаракан пысăк операцисене пурнăçа кĕртет» (Сталин).

Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пирĕн тыл та хăйĕн пĕтĕм вăйне тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçе парать. Чăваш республикинчи ĕççыннисем, хăйсен фронтри тăванĕсем паттăррăн кĕрешнĕ пекех, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парас тесе тылра кунне-çĕрне пĕлмесĕр, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Предприятисенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем нормăна икшер-виçшер хут иртерсе тултараççĕ. Пирĕн республикăра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнă предприятисем те чылай ĕнтĕ. Çавăн пекех колхозниксемпе МТС-сенчи работниксем те фронта апат-çимĕç парса тăрасшăн ырми-канми кĕрешеççĕ.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем фронтра, Совет Союзĕнчи ытти халăхсен ывăлĕсемпе юнашар тăрса, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсене 1.475 çынна СССР Правительствин орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă. Пирĕн халăхăн 5 паттăр ывăлĕ Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Пирĕн мухтавлă земляксем хушшинче чаплă командирсемпе генералсем те пур. Шупашкарта çуралса ӳснĕ генерал-лейтенант Александр Николаевич Боголюбов юлташ пек паллă земляксемпе пирĕн республика тивĕçлипех мухтанма пултарать.

Пирĕн çĕршыв çине килсе тапăннă тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ тунă çитĕнӳсем пĕчĕк мар. Анчах çак çитĕнӳсем пирĕн пуçа çавăрса яма пултараймаççĕ. Хĕрлĕ Çар тунă ăнăçу вăл «Гитлер çарне пĕтерсе тăкнине пĕлтермест, Хĕрлĕ Çарăн ĕнтĕ Гитлер çарне пирĕн çĕршывăн хĕвеланăç чиккисем патне çитиччен хăваламалли çеç юлать, тесе шутлама май памасть. Çакăн пек шутлани — хамăра хамăр айванла тата сиенлĕн лăплантарни пулнă пулĕччĕ. Çапла шутлани — хамăрăн вăйсене ытлашши хак пани, противникăн вăйĕсене хакламанни тата авантюризма кĕрсе ӳкни пулнă пулĕччĕ. Тăшман поражени тӳсрĕ, анчах ăна çĕнтерсе тăкман. Хĕрлĕ Çар пырса çапнипе пула нимĕç фашисчĕсен çарĕ кризис тӳссе иртерет, анчах çакă ĕнтĕ вĕсен çарĕ вăй илме пултарас çуккине пĕлтермест. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ пĕтмен-ха, — вăл халĕ çеç саралса тата хĕрӳленсе пырать. Нимĕçсем пирĕн çĕрĕн пĕр километрне те пулин çапăçусăрах пăрахса хăварĕç тесе шутлани ăссăр пулнă пулĕччĕ», тесе асăрхаттарать Сталин юлташ.

Хĕрлĕ Çарăн малашне те тăшмана хирĕç хаяр кĕрешӳ туса пымалла пулать. Çак кĕрешӳ вăхăт, жертвăсем ыйтать, хамăрăн мĕнпур вăя хума тата мĕнпур майсене мобилизацилеме хушать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Сталин юлташăн приказне сӳтсе явас майпа пулса иртекен митингсенче рабочисемпе колхозниксем, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илсе, фронта пулăшассине вăйлатма пулаççĕ.

Челноков юлташ, главнăй инженер пулса тăракан заводри пĕр цех коллективĕнчи митингра стахановка Быстрова юлташ сăмах тухса каланă. «Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче тăшман войскисене пырса çапассине вăйлатма хушрĕ, терĕ вăл. Юратнă полководецăн приказне ответлесе, эпĕ малашне татах та лайăхрах ĕçлеме, нормăна кунсерен 170 процентран кая мар тултарма обязательство илетĕп».

Рабочисемпе пĕрле колхозниксем те, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатаççĕ, хăйсене панă ытти заданисене те срокчен тултарма тăрăшаççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозниксем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли çур çул планне ăнăçлăн тултарнă, халĕ виççĕмĕш кварталшăн вутă хатĕрлеççĕ.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа панă приказ производствăллă тата политикăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçарса ярать. Çак çĕкленӳпе усă курса, предприятисен фронт валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларассине вăйлатмалла, колхозниксемпе колхозницăсен тата ялхуçалăхĕнчи ытти работниксен Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах апат-çимĕç парса тăрассишĕн кĕрешмелле.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсен хальхи задачи — Сталин юлташăн приказне кашни рабочипе служащи патне, кашни колхозникпа колхозница патне çитересси пулса тăрать. Агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатса ярса, рабочисемпе колхозниксене, мĕнпур ĕççыннисене Сталин юлташăн приказĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсене фронта пулăшассине вăйлатма мобилизацилемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 24-мĕшĕнчи касхи пĕлтерӳ

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем тиенĕ 150 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 20 батарейине тата минометсен 8 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, тăшманăн оборони ăшне савăлланса кĕнĕ. Нимĕçсем мотопехотăпа танксем илсе пынă та авиаци пулăшса пынипе хаяррăн контратакăсем тума тытăннă. Тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче винтовкăсемпе автоматсем нумай.

* * *

Краматорская хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшманăн контратакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕç танкĕсем совет подразделенийĕсен çапăçу речĕсем хушшине савăлланса кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем, пулеметсемпе персе, танксем хыççăн пынă нимĕç пехотине танксенчен татса илнĕ те çĕр çумне лапчăнтарнă. Çав вăхăтра артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 13 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем вăйлăн çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ. Çав пунктăн урамĕсенче тăшманăн 200 вилли ытла выртнине шутласа кăларнă. 6 оруди, тырă складне тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Малоархангельск районĕнче халăх пурăнакан пĕр пысăк пункштăн пынă çапăçура Н-ски часть 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем, малалла куçса, трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче нимĕçсен 3 танкĕ пур.

* * *

Краснодартан хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр участокра совет боецĕсем нимĕç пехотин 2 батальонне уйăрса илнĕ. Нимĕçсене йĕри-тавра хупăрласа илсе, пирĕн подразделенисем халь парăнма килĕшмен гитлеровецсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра Кислицын юлташ ертсе пыракан подразделенири танксем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕç пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Февралĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсем Белоруссире кĕрешекен партизансен отрячĕсен группине хирĕç пысăк карательнăй экспедици янă. Партизансем гитлеровецсен пĕрремĕш атакине сирсе янă. Карательсем пысăк çухатусем тӳснĕ, каçалапа вара каялла чакнă. Çĕрле партизансем часовойсене пĕр сасă чĕвĕсĕр вĕлерсе пĕтерсе, гитлеровецсем вырнаçнă яла вăркăнса кĕнĕ. Хаяррăн çапăçса, совет патриочĕсем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен карательнăй отрячĕ, кĕтмен çĕртен пырса çапнă хыççăн пăртак тăна кĕрсен, партизансене хăваласа тытăннă. Совет патриочĕсен ушкăнĕ вăрмана чакнă та гитлеровецсене малтанах лартса тухнă засадăсем патне илсе тухнă. Çав карательсене вара вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа панă приказĕ пирĕн çĕршыври халăха питĕ хавхалантарчĕ. Ĕççыннисем хăйсен йышлă çынлă пухăвĕсемпе митингĕсенче çапла калаççĕ: Сталин юлташăн приказĕ пире тăван çĕршывпа совет хĕçпăшалĕн чапĕшĕн çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарать. Хĕрлĕ Çар малашне те хăйне кирлине пурне те илсе тăрĕ. Эпир Хĕрлĕ Çара хамăр çĕршывран тăшмана часрах хăваласа яма пулăшас тесе мĕнпур вăйран тăрăшăпăр теççĕ.

Ленинградри Миронов юлташ директор пулса тăракан заводра митингра фрезеровщик Громов юлташ сăмах тухса каланă, вăл çав заводра 35 çул ĕçленĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла каланă: „Сталин юлташăн приказне вуласан эпир, Ленин хулинчи ватă рабочисем, çĕнĕ вăй кĕнине туйрăмăр. Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсем пирĕн чĕрене савăнтараççĕ, курайман тăшмана пĕтĕмпех пĕтерсе тăкас кăмăлпа тултараççĕ", тенĕ. Ленинградри Н-ски заводри рабочисем хăйсен митингĕнче майăн 1-мĕшĕ тĕлне планран иртерсе оборона продукцине нумай туса кăларма обязательство илнĕ.

Пензăра Павлов юлташ директор пулса тăракан заводри рабочисен митингĕнче работница Ситникова юлташ сăмах тухса каланă. „Сталин юлташ чĕннине, — тенĕ Ситникова юлташ, — эпир çĕнĕ стахановла ĕçсемпе ответлĕпĕр. Эпĕ ку завода çурçул каялла килсе кĕтĕм, эпĕ фронта кайнă упăшка вырăнне ĕçлеме кĕтĕм. Кулленхи нормăна 200—250 процент таран тултарма сăмах паратăп, — тенĕ. Митинг хыççăн нумай работниксем хăйсен сменăри нормисене иртерсе тултарнă.

Казах ССР-ĕнчи Джамбул районĕнчи „Интьмак" ятлă ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен пухăвĕнче колхозница Сейбекова сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: „Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказне вуланă хыççăн эпир хамăр валли пĕр вывод тăватпăр: тимлĕн ĕçлесе, вăйлăн ĕçлесе Хĕрлĕ Çара ылханлă нимĕçсене аркатса тăкма пулăшăпăр. Кăçал эпир çуракине тата лайăхрах туса иртерĕпĕр, пысăк тухăçлă тырă, рис, чĕкĕнтĕр, пахча-çимĕçсем туса илĕпĕр", терĕ. Колхозниксем фронта пĕлтĕрхинчен 10 пин пăт ытла тырă пама, кунсăр пуçне тата Хĕрлĕ Çарăн фондне хывма 6 гектар тĕштырă акса хăварма йышăннă.

Фашистла нимĕç мошенникĕсен суя пĕлтерĕвĕ

Нимĕçсен информаци бюровĕ февралĕн 23-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерӳ сарнă: „Нимĕçсен официальнăй даннăйĕсем тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн 5.400.000 салтакĕ тыткăна лекнĕ. Кун çумне тата вилнисемпе аманнисене 12.800.000 çынна хушас пулать. Çапла вара, вăрçă пынă çирĕм уйăх хушшинче Хĕрлĕ Çар 18.200.000 çын çухатнă. Кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар çак вăхăт хушшинче 48.000 оруди тата 34.000 танк çухатнă", тенĕ.

Çак „нимĕçсен официальнăй даннăйĕсем" гитлеровецсем виçине пĕлмесĕр суйнă элексем пулса тăраççĕ. Çавăн пек ăссăр пĕлтерĕве вуласа тухнă хыççăн чипер шухăшлама пултаракан кашни çыннах çапла ыйтать: Германири информаци бюровĕнчи жуликсем кăтартса панă пек çав тери пысăк çухатусем тунă пулсан, Хĕрлĕ Çар юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕç фашисчĕсен çарне чылай пысăк пораженисем тӳстерме, фашистла захватчиксенчен 14 облаçа, края тата автономлă республикăна ирĕке кăларма, противникăн 112 дивизине çĕмĕрсе тăкма, тăшманăн 700.000 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкма, 300.000 ытла салтакне тыткăна илме, нимĕçсен 7.000 танкне, 4.000 самолетне, 17.000 орудине тата ытти нумай хĕçпăшалĕсене пĕтерсе тăкма е тытса илме мĕнле пултарнă-ха? Фашистла камитсем виçерен тухса суйни тата маччаран илнĕ цифрăсем пичетлени паллă мар-и вара.

Ирсĕр нимĕç фашисчĕсем мĕнле суйса пĕлтернине тахçантанпах пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Гитлеровецсем советăн çĕршер те çĕршер пин мирлĕ гражданĕсене — вырăссене, украинецсене, белоруссене, литовецсене, латышсене, эстонецсене нимĕç чуралăхне тата каторгăна хăваласа каяççĕ, вара вĕсене, вăрçă вăрçмалли пĕтĕм тĕнчери правилăсене пăсса, тыткăна лекнĕ çар çыннисен шутне кĕртеççĕ, выçăхтарса тата асаплантарса вĕлерсе пĕтереççĕ. Гитлеровецсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче çĕршер те çĕршер пин совет çыннисене, вăл шутрах хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене те, вĕлерсе пĕтереççĕ, çапла майпа хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрне шăлса лартма тăрăшаççĕ, хăйсем вĕлернĕ мирлĕ халăха Хĕрлĕ Çар çухатăвĕсен шутне кĕртеççĕ.

Анчах Совет çĕрĕ çинче нимĕçсем тунă юнлă ĕçсем тата вăрçă мĕнле пыни çинчен вĕсем ăссăррăн суйса пĕлтернисем хăйсене пурпĕрех пĕтерсе тăкассинчен гитлерла ирсĕрсене хăтараймĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Иосиф Виссарионович Сталина

Хамăрăн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарăн уявĕ кунĕнче сире, çав çарăн Главнокомандующине, вырăссен православнăй чиркĕвĕн духовенстви тата ĕненекенсен ячĕпе салам яратăп. Тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкса, хĕнхур тӳснĕ çĕршыв тепĕр хут çĕкленнине курса савăнма Сире ăшра кĕл туса сĕнетĕп. Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе Дмитрий Донской ячĕпе танксен колоннине тума укçа пухма эпĕ чĕнсе каланине ĕненекенсем хапăл турĕç. Мĕн пурĕ 6 миллион тенке яхăн укçа пухрĕ тата ылттăн, кĕмĕл япаласем нумай пухрĕç. Пуринчен ытла Мускав хулипе облаçĕнчи духовенствăпа ĕненекенсем хастарлă пулчĕç, — вĕсем 2 миллион тенкĕ укçа пухрĕç; Куйбышев хулинчи духовенствăпа ĕненекенсем 650.000 тенкĕ укçа тата ылттăнпа кĕмĕл япаласем пухрĕç; Хусан хулинче — 350.000 тенкĕ укçа, пĕр кĕрепенке ылттăн тата кĕмĕл япаласем; Саратов хулинче — 350.000 тенкĕ укçа; Молотов хулинче — 300.000 тенкĕ укçа; Пенза хулинче — 500.000 тенкĕ тата Ленинград облаçĕнче — 500.000 тенкĕ укçа пухрĕç. Укçа-тенкĕ пухасси малалла та пулса пырать. Хĕрлĕ Çар уявĕ кунĕнче çак укçана вырăссен православнăй чиркĕвĕн духовенствипе ĕненекенсен парни вырăнне хурса йышăнăр.

Патриарх местоблюстителĕ Сергий,

Мускавпа Коломна митрополичĕ.

УЛЬЯНОВСК

Патриарх местоблюстительне Сергие, Мускавпа Коломна митрополитне

Вырăссен православнăй духовенствипе ĕненекенсене, Дмитрий Донской ячĕпе танксен колоннине тума 6 миллион тенкĕ укçа тата ылттăнпа кĕмĕл япаласем пухнăскерсене, манран чĕререн салам калама тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тума ыйтатăп.

И. СТАЛИН.

ПАХА ВĂРЛĂХСЕМ ХАТĔРЛЕНĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кĕçĕн Чуллари „Победа" колхоз 1942 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Акнă çĕр лаптăкĕнчен начар мар тырпул туса илчĕç. Кăçал иртнĕ çулхинчен вăйлăрах тырпул туса илес тесе колхозниксем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Колхоз тимĕрçи М. Иванов юлташ кĕске вăхăт хушшинчех 12 плуг юсарĕ.

Колхозри чи ватă стахановец Е. Фомин юлташ çак кунсенче çĕнĕрен 15 вĕрен, 10 мăшăр урапа тевĕшĕ, 20 тилхепе явса хучĕ, сӳре туртисем 25 турĕ.

Колхозниксем вырăнти удобренисене хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе те аван ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпе 10 центнер фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килнĕ, 10 центнер кĕл пухнă, 40 гектар çинче юр тытса юлмаллисем тунă. Акмалли вăрлăхсене лайăх сортласа, вĕсен шăтаслăхне лабораторинче тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсем пурте кондицине лараççĕ. Пăрçа вăрлăхĕ 98 процент, урпа 99 процент, пăри 100 процент шăтаççĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхоз председателĕ Н. Федоров юлташ лайăх ĕçлет. Вăл кашни кунах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулать. Панă нарядсене пурнăçланине тĕрĕслет.

С. Шадин.

СССР Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Шапошников патĕнче пулнă йышăну

Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ XXV çул тултарнă ятпа СССР Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Б. М. Шапошников юлташ Куйбышев хулинче ютçĕршывсен СССР-ти посольствисемпе миссийĕсенчи çар тата тинĕс-çар флочĕн ататашисемпе вĕсен помощникĕсем валли йышăну туса иртернĕ.

Йышăнура çаксем пулнă: çар тата тинĕс-çар флочĕн атташисем, вĕсен помощникĕсем; Ютçĕршывĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ, контр-адмирал М. М. Долинин юлташ тата ИКО, НКВМФ, НКИЛ ответлă сотрудникĕсем пулнă.

Республикăри ĕççыннисем çулпуç приказне сӳтсе яваççĕ

„Фронта пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя мобилизацилетпĕр"

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 25-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Паян районри ĕççыннисем Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕнче панă приказа пичетлесе кăларнă хаçатсене илчĕç. Предприятисемпе учрежденисенче вуншар агитаторсемпе беседчиксем рабочисемпе служащисене Сталин юлташăн приказĕпе паллаштарчĕç. Верховный Главнокомандующин приказĕ рабочисене ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерсе ĕçлеме хавхалантарчĕ. Вĕсем çулпуçăн приказĕ çине татах та лайăхрах ĕçленипе, фронта пулăшассине вăйлатнипе ответлеме пулчĕç.

— Эпир февраль уйăхĕнчи задание срокчен пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пирĕн бригада кирек мĕнле ĕçе те срокчен чыслăн пурнăçлама хатĕр. Сталин юлташăн приказĕ пире тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать, фронта пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя мобилизацилетпĕр, — терĕç комбинатри Краснощеков ертсе пыракан бригадăн членĕсем.

Паланри завод коллективĕ февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне январьпе февраль уйăхĕсенчи производство планне 102 процент пурнăçларĕ. Уйрăм стахановецсемпе стахановкăсем: Гаврюшкина, Сылыгин, Романова, Иваничев юлташсем Хĕрлĕ Çар кунне хăйсен уйăхри ĕç планне 135—150 процент тултарнине паллă турĕç.

Завод коллективĕ халĕ татах та пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлет. Виçĕмкун тата ĕнер завод ĕç графикне чылай иртерсе пурнăçларĕ. Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, завод коллективĕ февраль уйăхĕнчи ĕç планне 110 процентран кая мар пурнăçлама пулчĕ.

Х. Лисин.

Вăрнар районĕ чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли çур çул планне тултарчĕ

ВĂРНАР, февралĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер район чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли çур çул планне ăнăçлăн тултарчĕ. А. Трошкина юлташ лучковăй пăчкăпа кулленех 6-шар кубометр вутă хатĕрлесе пычĕ. Вăрман турттаракан Андрей Елдыров кунсерен 10-шар кубометр вутă турттарса тăчĕ.

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв ячĕпе панă приказĕ районри ĕççыннисене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ. Колхозниксем халĕ чугунçул транспорчĕ валли виççĕмĕш кварталшăн вутă хатĕрлеççĕ. Вăрманта кулленех касакансем 300 çын ытла, турттаракансем 250 çын ĕçлеççĕ.

Сталин юлташăн приказне сӳтсе явас тĕлĕшпе иртекен пухусемпе митингсенче районри ĕççыннисем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тата вăйлăнрах ĕçлеме пулаççĕ.

С. Коротков.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Февралĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун панă приказа машинно-тракторнăй станцинчи кашни тракторист, трактористка, ремонт ĕçне тăвакан рабочи тĕплĕн итлерĕç. Сталин юлташăн приказĕ ĕçе çĕнĕ вăй кĕртрĕ. Трактористсем, трактор бригадисем ялхуçалăх ĕçĕнче татах та лайăхрах, нумайрах ĕçлеме тупа тăваççĕ. Ермолаев, Эзенкин, Молотин трактористсем ертсе пыракан трактор бригадисем Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн тӳрех ĕçе тăчĕç.

МТС коллективĕ Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн ĕçре çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлеме пулчĕ. Сталин юлташ панă приказа вуласа тухнă хыççăн иккĕмĕш номерлĕ бригада (бригадирĕ Афондеркин юлташ) конкретнăй обязательство илчĕ. Бригада 1942 çулта тракторсемпе тумалли ĕç планне 138 процент тултарнă. Кăçал бригада çулталăкри ĕç планне 150 процентран кая мар тултарма пулчĕ.

Г. Иванов.

МТС директорĕ.

СĂРЪЯЛ ВĂРÇĂ КУНĔСЕНЧЕ

Сăръял, Елчĕк районĕнчи ытти ялсем пекех, мĕнпур ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыма тăрăшать. Ялти кашни ĕççынни халĕ хăйĕн мĕнпур вăйне, пултарулăхĕпе тавçăрулăхне ылханлă тăшмана аркатса тăкнă çĕре парас ĕмĕткăмăлпа пурăнать. Мĕншĕн тесен колхозниксемпе колхозницăсем çакăн пек тулăх та культурăллă пурнăça Совет влаçĕн тивлечĕпе çеç тунă. Юлашки 12 çул хушшинче (ялта колхоз организациленĕренпе) çĕр хуçалăх ытла кил-çуртсем çĕнĕрен лартнă.

Колхозра пĕтĕмпе 207 хуçалăх. Колхозăн акмалли çĕр лаптăкĕ, пахчасемпе çарансене шутламасăр, 1.300 гектар ытларах шутланать. Колхозăн фермисенче 164 пуç сурăх, 110 пуç мăйракаллă шултăра выльăхсем. Вăйпитти арçынсем алла хĕçпăшал тытса фронтра çапăçнă вăхăтра колхозри ĕçсене пурнăçлама çăмăлах мар. Апла пулин те ачалăхра нумай асапсем курса ӳснĕ Абдул Гаязович Гаязов, халĕ çак ялти «Марс» колхозăн пултарулла руководителĕ, Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшма, партипе правительство колхозлă ял умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама колхозниксене вăйлăн мобилизацилесе тăрать. Вăл хăйĕн мĕнпур пĕлĕвне, ĕçри пултарулăхне колхоз хуçалăхне малалла тĕреклетсе пынă çĕре парать.

1. ХАВАСЛĂ ТА ШАВЛĂ ПУХУ

Халăхсен юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен каланă сăмахсем совет патриочĕсен чĕрисене тарăнăн кĕрсе вырнаçрĕç. Çулпуçăн историллĕ докладне ответлесе, тăван çĕршывра халăхсен укçи-тенкипе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарма самолетсемпе танксем туянма укçа-тенкĕ пухас ĕç пуçланчĕ. Ку ĕçе чи малтан Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем пуçарчĕç. Вĕсем икĕ эрне хушшинче 40 миллион тенкĕ пухса, ăна танксен «Тамбовский колхозник» ятлă колоннине тума пани çинчен Сталин юлташа пĕлтерчĕç. Сталин юлташ вĕсене тăванла салам ячĕ тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Тамбовецсен мухтава тивĕç пуçарăвĕ пĕтĕм çĕршывĕпе хăвăрт сарăлчĕ. Вырăс хресчĕнĕ-патриот Ферапонт Петрович Головатый колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе перекетленĕ 100 пин тенкĕ укçине боевой самолет илме панă. Сталин юлташ Головатый колхозника чĕререн тав туса телеграмма ячĕ.

Ферапонт Головатыйăн çак патриотизмлă ĕçĕ пĕтĕм халăха хумхантарчĕ. Ку хыпара радио пĕлтерсенех Абдул Гаязов колхозниксен пĕрлехи пухăвне пухнă.

— Паянах колхозниксене Головатый юлташăн [illegible]

[illegible]

Хăйсен руководителĕн примерне колхозниксем [illegible] йышăнчĕç. Пухура пĕрин хыççăн тепри хĕрӳллĕ сăмахсем тухса калаçрĕ. Çапла вара кашни колхозник хăйĕн перекетлĕ укçи-тенкине танксем колоннине тума пама каларĕ. Кĕске вăхăт хушшинче «Колхозник Чувашии» колоннине тума 500.000 тенкĕ укçа пухăнчĕ. Танксен колоннине тума 5—6 пинрен кая мар [illegible] колхозник пĕрре те пулмарĕ.

Пухура колхозниксем хуçалăхсенчи [illegible] тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывасси çинчен сăмах пуçарнă. Ку тĕлĕшпе те Абдул Гаязов хăйĕн шухăшне чи малтан пĕлтернĕ. Вăл хăйĕн хуçалăхĕнчи 36 пăт тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывасси çинчен каланă. Колхозниксем ку пуçарăва та йышăнса илнĕ. Пĕринкĕ кун хушшинче Хĕрлĕ Çар фондне хывма колхозĕпе 360 пăт тырă пухăннă.

Çак пуху хыççăн колхозниксем фронта пулăшас ĕçе татах вăйлатнă. Комсомолецсемпе çамрăксем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 24.000 тенкĕ укçа пухнă. Ку ĕçре шкул ачисемпе пионерсем те ваттисенчен юлман. Гаязовăн 7-мĕш класра вĕренекен Наиль ятлă хĕрачи, çуллахи вăхăтра колхозра 70 ĕçкунĕ тунăскер, танксем тума 100 тенкĕ, унăн 2-мĕш класра вĕренекен хĕрачи — — Саня 50 тенкĕ панă.

Гаязов юлташ вара хăйĕн сăмахне ытлашшипех пурнăçланă, вăл танксем тума 100 пин тенкĕ панă.

2. КОЛХОЗĂН ПУЛТАРУЛЛĂ РУКОВОДИТЕЛĔ

Вăл мĕнпур ĕçре чи малтан хăй пуçарулăх кăтартать. Унăн пуçĕнчен яланах çак шухăш тухма пĕлмест: колхозри мĕнпур ĕçе вăхăтра туса пырасчĕ, фронтпа тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулас марччĕ. Çаксене пурнăçлас тесе, Гаязов юлташ колхозри мĕнпур майсене ĕçе янă. Колхозри пĕтĕм ĕç вăйне ĕçе явăçтарнă.

Вăрçă, чи малтанах, колхозри ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма хушрĕ. Çĕршыв çак хăрушă кунсене пурăнса ирттернĕ вăхăтра пĕр çын та ĕççĕр ларма тивĕçлĕ мар. Абдул Гаязов вăрçă пуçлансанах мирлĕ вăхăтра колхозра ĕçлемен ватă колхозниксене, инвалидсене, ачаллă хĕрарăмсене тата çамрăксене уйрăмшарăн колхоз правленине пуха-пуха калаçнă.

Вăл вĕсене вăрçă вăхăтĕнче колхоз производстви ĕç вăйĕ ытларах ыйтни çинчен тĕплĕн ăнлантарнă. Стариксемпе инвалидсене çăмăл ĕçсене лартнă. Вăрçă пуçланиччен амбарсене, итемсене тата уйхире хураллакă çĕрте вăйпитти çынсем ĕçленĕ пулсан, вăл вĕсене халĕ вăй ытларах ыйтакан, йывăртарах участоксене куçарнă. Правлени аппаратĕнчи хăшпĕр работниксене те уйхир ĕçне явăçтарнă. Вĕсен вырăнне вăрçă инваличĕсене лартнă.

Гаязов юлташ пĕррехинче шкул ачисене колхоз правленине пуçтарнă та калаçу ирттернĕ. Вăл вĕсен тантăшĕсем колхоз производствинче çеç мар, фронтра та геройла ĕçсем туни çинчен хумханмалла каласа панă. Ачасем, председателĕн витĕмлĕ сăмахĕсене яланах пысăк тимлĕхпе итлеме вĕреннĕскерсем, ку расра пионер-партизан, Совет Союзĕн Геройĕ Александр Чекалин çинчен [illegible] Вăл канашлура шкул ачисем Гаязов юлташа хăйсене каникул вăхăтĕнче колхоз ĕçне активлăн хутшăнма сăмах пачĕç. Чăнах, вĕсем хăйсен сăмахне тӳррĕн пурнăçланă. Колхоз производствинче активлăн хутшăннă.

[illegible]

Гаязов юлташ колхозăн кашни кĕтессине çитме ĕлкĕрет. [illegible]

[illegible] 1942 çулта колхоз государствăна 1.029 центнер тырă панă, [illegible] Хĕрлĕ Çар фондне тырпул [illegible]

Çапла пурăнать вăрçă кунĕсенче Сăръял.

С. ШАДИН.

ЕЛЧĔК. («Чăваш Коммуни» корр).

Фронтовиксене пулăшаççĕ

Сĕмĕрле районĕнчи Егоркинори «Большевик» колхозăн членĕ В. Иванова [illegible] Хĕрлĕ Çара [illegible] хуçалăхра унăн ĕçе пулман. Халĕ вăл колхоз ĕçĕнче [illegible] пулăшрĕ. Кашни уйăхрах продуктсем парса пулăшать.

А. Яндулов.

МАРИЕЦСЕМПЕ ПИРĔН ХУШĂРА ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУРА МАЛА ТУХАССИШĔН!

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне республикăра 85.000 çын ытла хутшăннă

Профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа ирттерекен йĕлтĕрлĕ кросĕ республикăра сарăлсах пырать.

1941 çулта йĕлтĕрлĕ кроса республикăра 35.290 çын хутшăннă пулсан, кăçал вара кросăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче ăмăртусене 85.000 çын ытла хутшăннă, вĕсен шутĕнче 13.523 комсомолец.

Йĕлтĕрлĕ кросс уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Шупашкар, Шăхасан, Чкаловски районсенче тата Шупашкар хулинче ăнăçлăн пырать. Хĕрлĕ Чутай районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кириллов юлташ) вунă кун хушшинче кроса 4.953 çын, вĕсен шутĕнче 397 комсомолец хутшăннă. Ăмăртăва хутшăннисенчен 4.486 йĕлтĕрçĕ ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене панă. Çĕмĕрле районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кощеева юлташ) кроса 4.421 çын хутшăннă. Вĕсен шутĕнче 641 комсомолец. 3.873 çын ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене панă.

Республика столицинче кроса 7.535 çын хутшăнса, 7.286 çын ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене панă. Кроса хутшăннисем хушшинче 1.860 комсомолец.

Анчах Шăмăршă, Елчĕк, Советски, Улатăр, Кувакино районĕсенче тата Улатăрпа Канаш хулисенче йĕлтĕрлĕ кросс халĕ те сӳрĕккĕн пырать-ха. Кроса Советски районра 974 çын, Елчĕк районĕнче 1.229 çын, Канаш хулинче 1.647 çын, Улатăр хулинче 1.100 çын çеç хутшăннă. Асăннă районсемпе хуласенчи комсомолпа профсоюз руководителĕсем йĕлтĕрлĕ кроса кирлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пĕтиччен шутлă кунсем юлчĕç. Мĕнпур комсомолецсемпе профсоюз членĕсем кроса хутшăнма тивĕç. Çавăнпа кашни кунах старт çине çĕршер те пиншер çамрăка тăратмалла. Çакăн пек тусан çеç эпир мариецсемпе пыракан ăмăртура мала тухма, Совет Союзĕнчи облаçсемпе республикăсен хушшинче хисеплĕ вырăн йышăнма тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме пултаратпăр.

Вăрманта фронтри пек ĕçлеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, леспромхозри рабочисемпе колхозниксем вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Февралĕн 1-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕ хушшинче вăрманта фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх пырать. Çак уйăхлăха хутшăнса ĕçленипе чылай колхозсем тата уйрăм рабочисемпе колхозниксем пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсем С. Иванов, В. Ефремов, В. Чураков юлташсем 1-мĕш квартал планне 160—180 процент тултарчĕç. «Комбайн» колхозран пынă бригада 1-мĕш кварталти плана пĕр уйăх хушшинчех 144 процент тултарнă.

Стахановецсен шучĕ ӳссех пырать. Вăрман ĕçлеме халь çеç пынă А. Федоров («Тымар» колхозран), И. Максимов («Трактор» колхозран) юлташсем те ĕç нормине 150 процента çити тултарса пыраççĕ.

Кăтамас Туçари мастер участокĕнче ĕçлекенсем те ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерне. «МОПР» колхоз членĕсем Е. Черно[illegible] тата М. Сидоров кулленхи нормăна 115 — 120 процент тултарса пырса, январь уйăхĕнче кашниех 94-шар кубометр вутă касса хатĕрленĕ, уйăхри задание 114 процент тултарнă.

Вăрман хатĕрлевĕнче «Коммунар», «Коминтерн» колхоз членĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Л. Васильев юлташ («Коммунар» колхозран) январь уйăхĕнче пĕччен 96 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. П. Ижденев, М. Терентьев, Г. Иванов колхозниксем («Коминтерн» колхозран) лашапа вутă турттарнă çĕрте нормăна 250 процента çити тултараççĕ.

Дм. Михайлов.

Хĕрсем, вăрçă ĕçĕн ăсталăхне алла илĕр!

Совет хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсем хăйсен ашшĕсемпе, пиччĕш-шăллĕсемпе, упăшкисемпе пĕрле тылра фронт валли хĕçпăшал хатĕрлеççĕ, вăрçă ăсталăхне вĕренеççĕ. Совет хĕрĕсем вăрçă ăсталăхне алла çавăрса илсе, Хĕрлĕ Çара нимĕç фашизмне часрах çĕмĕрсе тăкма пулăшасшăн тăрăшаççĕ. Комсомол организацийĕсен обязанноçĕ—çамрăк совет хĕрĕсене çĕршыв сыхлăхне çирĕплетес ĕçре хăйсен пултарулăхне вăйлăрах палăртма пулăшасси пулса тăрать. Çамрăк совет патриотки пулеметпа пеме, снайпер пулма вĕренес тесе сунать пулсан, ăна пирĕн çав шухăша пурнăçлама пулăшас пулать. Çав патриотка вăрçă пуçланаччен винтовка тытма пĕлнĕ пулсан, халь вăл автоматпа пеме вĕренесшĕн пулсан, ăна пирĕн пулăшу памасăр тăма юрамасть. Пирĕн республикăри çамрăк хĕрсемпе хĕрарăмсем вăрçă ăсталăхне алла çавăрса илме тăрăшаççĕ, тăшмана пульăпа, гранатăпа тĕл тивертме вĕренеççĕ.

Вăрнар, Шăхасан, Пăрачкав, Кувакино районĕсенчи спецподразделенисем хĕрсенчен вуншар, çĕршер снайперсем, автоматчиксем, минометчиксем вĕрентсе хатĕрленĕ. Хĕрсенчен автоматчиксем хатĕрлес енĕпе Кувакино районĕ малти вырăнта тăрать. Унта занятисене çӳресси, вĕренекенсем хушшинчи дисциплина çӳлĕ вырăнта тăнă. Вăрçăра усă куракан патронсемпе пенĕ çĕрте те нумай боецсем лайăх тĕсĕлĕхсем кăтартнă. Вăрнар районĕнче боец-специалистсем хатĕрлес ĕçе военкоматри командирсемпе боецсене хутшăнтарнă. Вĕсем çав подразделенисене вĕрентме хăйсен боевой тата учебнăй хĕçпăшалĕсене илсе пыраççĕ. Парачкав районĕнче вăрçă ăсталăхне аван вĕрентнипе пĕрлех походра юрламалли юрăсене лайăх вĕрентнĕ.

Анчах вăрçă ĕçне вĕренессине пур çĕрте те кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Куславкка районĕнче командирсен составне тупса çитереймен пирки вĕренӳ чылай кая юлса пуçланнă. Чкаловски районра яланах занятисене кая юлса пуçлаççĕ тата вăхăт çитиччен чылай малтан киле салатаççĕ. Вĕренӳ пунктĕнче вĕренмелли япаласем çитмеççĕ. Çуртсене хутман пирки заняти пулманни те пулнă.

Хăшпĕр районсенче политикăллă воспитани ĕçне начар туса пыраççĕ. Çак ĕçе начар туса пынине пула вăрçă ĕçне вĕренекен хĕрсем комсомол ретне кĕресси питех те начар пулса пырать. Октябрьски, Пăрачкав, Вăрнар районĕсенче вĕренӳ пункчĕсенче заняти пуçланнăранпа та пурĕ 4—6 çынна çеç комсомол ретне илнĕ. Шупашкар хулипе Çĕмĕрле районĕнчи пунктсенче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене те йĕркелемен. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи вĕренӳ пунктĕнче пункт начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ халĕ те çук.

Комсомол организацийĕсен чылай руководителĕсем хĕрсемпе хĕрарăмсем вĕренекен спецподразделенисен ĕçĕпе пачах интересленмеççĕ. Хăшпĕр чухне çапла та пулать: пĕр-пĕр руководитель тепĕр чух çар ĕçне вĕренме кирли çинчен çулăмлă сăмахсем тухса калать, çав вăхăтрах вăл пăшал тытма та пĕлмест, вăрçă ĕçĕ çинчен нимĕн те пĕлмест. Ăçтан ертсе пыма пултарччăр-ха ĕнтĕ вăрçă ĕçне вĕренессине комсомол организацийĕсен çакăн пек руководителĕсем? Вăл винтовкăна, пулемета, автомата мĕнле тунине пĕлмест, йĕлтĕр çинче те тăма пултараймасть. Çакăн пек руководительсем ĕнтĕ, пĕр-пĕр боец вăрçă ĕçĕпе сыхăнса тăракан ыйту парасран хăраса, вĕренӳ пунктне пырса та курмаççĕ. Комсомолецсен нумай руководителĕсем, пуринчен ытла хĕрсем, комсомолецсене ертсе пырас ĕçе халь çеç лартнăскерсем, вăрçă ĕçне сахал пĕлеççĕ. Вĕсен вăрçă ĕçне 110 сехетлĕ программа тăрăх вĕренмелле те ĕнтĕ, вăрçă ĕçĕн искусствине вĕренсе çитсе, хальхи хĕçпăшала вĕренмелле.

Совет хĕрĕсем, вăрçă ĕçне вĕренессишĕн, вăрçă ĕçĕн специальноçĕсене алла илессишĕн çине тăрса кĕрешĕр! Çĕршыва хӳтĕлес çĕрте пиншĕр тĕрлĕ специальноçсем кирлĕ.

Г. Петрухин.

ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕ ютçĕршывсенчи пичетре

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа Верховный Главнокомандующи И. Сталин юлташ панă приказ Англи пичетĕнче чи паллă вырăн йышăнать. Хаçат заголовокĕсенче нимĕçсен пысăк çухатăвĕсем çинчен каланине уйрăмăнах палăртса хăварнă.

Рейтер агентствин вăрçă çинчен çыраканĕ Сталин приказĕ çинчен çапла калать: вăл приказра ĕненӳлĕхпе вăй сисĕнет, тет. Сталин, тесе çырать вăл, нимĕç стратегийĕн япăх енĕсене пит пысăк мастерлăхпа палăртрĕ. Хĕрлĕ Çар тупă ăнăçлăхсем вырăс командованин лайăх тактикине пула пулнă. Вăл маневрсем тума пултарни тата унăн çапăçу пултарулăхĕ Германи командованийĕннинчен лайăхрах, тет.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă май Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ панă приказпа США-ра пит хытă интересленеççĕ. Америкăри радиостанцисем пĕтĕм çĕршыв тăрăх вăл приказа анлăн пĕлтерне. Хаçат ăна курăнмалли вырăна пысăк саспаллисемпе пичетленĕ.

Государственный секретарĕн заместителĕ Уэллес, Сталин приказĕ пирки корреспондентсем панă ыйтусем çине ответлесе, çапла каланă: вырăс çарĕн пысăк çитĕнĕвĕсемпе питĕ хавасланатăп, тенĕ. США-ри пĕтĕм халăх çавăн пекех хавасланнине ĕненетĕп, тенĕ вăл.

Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнине США-ра уявлани

НЬЮ-ЙОРКРИ ПУХУ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 22-мĕшĕнче Нью-Йоркра Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа „Совьет Раша Тудэй" журнал редакцийĕ организациленĕ пуху пулса иртнĕ. Пухура 1700 çын пулнă.

Пухура Дэвис, генерал-майор Терри, Уитни т. ыт. те сăмахсем тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Дэвис [Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсем çинче нумай чарăнса тăнă. Вăл çапла каланă:

„Сталин, Молотов тата советсен ытти руководителĕсем малалла курса тăма пултарнипе тата вĕсен хăюлăхĕпе пултарулăхне пула Совет Союзĕ пит те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Чăн-чăн аслă çынсем пекех,— тет Дэвис,—Сталин мухтанма юратмасть. Эпĕ хам куçпа курнă промышленноçăн çав тери пысăк предприятийĕсене тунăшăн хăйне ырланине вăл пĕтĕмпех сирсе ячĕ. Вăл çитĕнӳсем пиншер инженерсем, хăйне пулăшакансемпе сотрудниксем тунипе пулнă, терĕ. Анчах та эпĕ çакна çирĕп ĕненетĕп,—тенĕ Дэвис:—çав çын малалла курса тăман, тĕрĕс шутламан тата çине тăрса тăрăшман пулсан, тивĕçлĕ условисем тума май пулман пулĕччĕ. Нимĕçсем вара совет чикки урлă каçсан танксем, орудисем, самолетсем тĕл пулман пулĕччĕç. Çавсене пула ĕнтĕ нимĕçсем Совет Союзне çĕнтерейĕмерĕç, Европăпа Азире тата Африкăпа ун таврашĕнчи тинĕссенче пуç пулса тăма пултараймарĕç.

Аслă вырăс халăхĕ,—тенĕ Девис,—çав тери пысăк испытание тӳссе ирттерчĕ, хăйĕн çирĕплĕхне, паттăрлăхне тата хăйĕн амăшне—Российăна чĕререн параннине палăртрĕ".

Дэвис уйрăмăнах вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă иртсен те вăрăма пыракан мир тăвас шутпа, Совет Союзĕпе çирĕп çыхăнса ĕçлеме кирлине палăртса хăварнă.

США çар министерствин представителĕ пулса сăмах каланă генерал-майор Терри Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене тулли кăмăлпа саламланă.

Железнодорожниксен профсоюзĕн председателĕ Уитни хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: паттăр офицерсемпе чаплă генералсем тата Сталин çав тери ăслăн ертсе пынине пула фашистла варварсене хытă пырса çапнă Хĕрлĕ Çара Америка рабочийĕсем салам яраççĕ", тенĕ.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа Британи владенийĕсенче пулнă çар парачĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мальта утравĕнче Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине ĕнер чаплăн уявласа иртерне. Çав майпала çар парачĕ пулнă.

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Палестинăра, Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа Британи войскисен парачĕ пулса иртнĕ. Çав майпа Палестинăн верховный комиссарĕ Мак Майл радио тăрăх сăмах тухса каланă.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 22-мешĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Баган утравĕсенче Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем пирки çар парачĕ пулса иртнĕ. Парада герцог Виндзорский йышăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине уявласа Коломбора (Цейлон утравĕ) çĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри чаçсен парачĕ пулса иртнĕ.

Турци пичечĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен

СТАМБУЛ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Турци пичечĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен нумай çырать. Нумай хаçатри статьясенче Харьковăн стратегиллĕ вырăнне паллă туса уйрăмăнах çакна асăрхаттараççĕ: нимĕçсем ноябрь вĕçĕнчен пуçласа, хăйсем çулла ултă уйăх хушшинче наступлени туса илнинчен ытларах çухатрĕç.

«Гедже Постасы» хаçат çапла çырать: «Вырăс çарĕсем Харькова хăвăрт тытса илни нимĕç çарне никам та çĕнтереймест тесе шутлакан паллă çар специалисчĕсене те тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ». «Паян лару-тăру,—тесе çырать хаçат, — Севастополь пек тата пушшех Сталинград пек паха центрсене хăйсен пурнăçне ним шеллемесĕр хӳтĕлени мĕн чухлĕ усă панине хаклама май парать. Пĕтĕм тĕнче пысăка хурса хакланă çав паттăрла оборона, вырăс çарне резервсем хатĕрлеме май панипе пĕрлех, тĕнĕл держависен çарĕсене çав тери лучăрканă, çавăн пирки те вырăс наступленине хирĕç халĕ вĕсем вăйлă оборона тума пултараймаççĕ».

«Ени Сабах» хаçат çапла çырать: «Нимĕçсем тырпуллă çĕр çинчен çав тери нумай кăшкăрашрĕç, халь вĕсем ăна çухатаççĕ», тет. «Ени Сабах» хаçатăн редакторĕ Ялчин çакна палăртать: «Германи çарĕ план тăрăх мар чакса пыни такамшăн та паллă. Вăл тытăнса тăма хăтланать те, тытăнса тăма пултараймасть. Вăл ĕнтĕ вăрçă пуçланă чухне пулнă Германи çарĕ мар».

«Тан» хаçат ăнăçлă наступлени туса пыракан совет войскисем хĕснине «Харькова хӳтĕлекен чи лайăх нимĕç дивизийĕсем те тӳсейменнине» уйрăмăнах паллă туса хăварать.

«Вакыт» хаçатăн редакторĕ Асым Ус, Хĕрлĕ Çар Ростовпа Харькова ирĕке кăларни «нимĕçсем чакни анлăн пулса пынине кăтартать, ăна ниепле те «хăйсен ирĕкĕпе» чакни теме çук», тет. «Совет премьерĕ тата верховный главнокомандующи Сталин, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă пуçлансанах, нимĕçсене аркатса тăкатпăр» тесе каланине асăрхаттарать автор.

Советпа Германи фронтĕнче Итали авиацийĕн командующийĕ вилнĕ

ЖЕНЕВА, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе Римра çакна пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Итали авиацийĕн командующийĕ бригада генералĕ Энрико Пецци хăй пулнă вăрçă операцийĕнчен каялла таврăнман.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ Н-ски завод валли спецнабор йĕркипе вĕренме кĕрекенсене пухать. Шкула вĕренме кĕрес текенсен заявленипе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: 1) медосмотрра пулни çинчен справка, 2) паспорт, 3) мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан справка. Çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: Шупашкар хули, Заводская урамĕ, 31. 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ.

1942-мĕш çулхи ноябрьте тиха çухалнă. Паллисем ça[illegible] сӳреп, çамки çинче шурă паллă пур. 1942 çулта çуралнă.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Красноармейски район, „Çăлтăр" колхоз правленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1258 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.